4965 43-152

СТИХВАН ШАВЛЫ

# ПОЭТ САССИ



ЧĂВАШГОСИЗДАТ—1943

ÇТИХВАН ШАВЛЫ

# ПОЭТ САССИ

*СĂВĂСЕМ*

ЧАССР ГОСУДАРСТВО ИЗДАТЕЛЬСТВИ
Шупашкар — 1943

ТУПМАЛЛИ. стр.


| | |
|---|---|
| Тăван çĕршыв | 3 |
| Çулпуçне | 4 |
| Хĕрлĕ çар | 5 |
| Комсомолецсен маршĕ | 6 |
| Вĕлер нимĕçе | 9 |
| Ут йаттăрсен ретне | 15 |
| Ялав | 16 |
| Хула | 19 |
| Гитлер çамки çине | 25 |
| Юлашки сехет | 27 |
| Степан Волков каласа хăварни | 28 |
| Титенков Мускава сыхлать | 31 |
| Ĕмĕт | 33 |
| Килĕ Робеспьер | 36 |
| Тулон матросĕсем | 38 |
| Пăр çинчи çапăçу | 40 |
| Вырăс салтакĕ | 42 |
| Наполеон тарни | 44 |
| Реквием | 49 |
| Пĕр хĕрарăма | 50 |
| Мускав | 53 |



Редактор *К. Чулгась.*

НТ. 513 Подп. к печ. 20-XII-43 г. Объем 1,75 п.л.

Зак. № 863. Т. 2000 Тип. 1 Упр. полиграфир. при СНК ЧАССР, г. Чебоксары

## ТӐВАН ҪӖРШЫВ

Парӑнман Раҫҫейӑн ҫӗрӗ,
Хӗҫ витмен ун паттӑрне,
Ӗмӗр сывӑ, ӗмӗр чӗрӗ,
Ӗмӗр ҫӗртмӗ хӑй ятне.
Эсӗ аслӑ та мухтавлӑ,
Эсӗ чаплӑ та пуян,
Эсӗ вӑйлӑ та хӑватлӑ,
Эсӗ Улӑп пек тӑран.

Ҫут Октябрь ҫунатлатрӗ,
Вӗлкӗштерчӗ ялавне,
Пӗрлештерчӗ, тӑванлатрӗ
Ҫӗршыври халӑхсене.
Эсӗ ирӗклӗн сывлатӑн,
Эс—пӗр чӑмӑр, эс—пӗр шут,
Эсӗ ҫирӗппӗн утатӑн,
Эсӗ—ҫамрӑк, эсӗ—вут.

Пӗтӗм ҫӗр хускалчӗ харӑс,
Ватӑ Кремль йыхӑрсан,
Сталин харсӑрӗсем карӗҫ
Нимӗҫе хӑваласа.
Эсӗ тӑвӑл евӗр ҫапрӑн,
Эсӗ кӗтӗн вут ӑшне.
Тӑшман урчӗ, тӑшман чакрӗ,
Кӗл ҫеҫ пулӗ малашне.

Мирлĕ кун килет хаваслăн,
Иртсе кайĕ тар шăрши,
Уççăнрах юрлар пĕр саслăн:
„Сывă тăр, тăван çĕршыв!“

Эсĕ аслă та мухтавлă,
Эсĕ чаплă та пуян,
Эсĕ вăйлă та хăватлă,
Эсĕ Улăп пек тăран.

---

## ÇУЛПУÇНЕ

Хăрушă пулчĕç вăхăтсем,
Ытла та асрĕç нимĕçсем,
Анчах та Эсĕччĕ пуçра
Ялан, ялан!—ирпе, çĕрле
Эс пултăн халăхпа пĕрле.

Çĕр çул, пин çул эс пурăн,
Хĕвел пек çуттăн курăн!
Мухтав сана, мухтав,
Эй, тав сана, эй, тав!

Тиран хаяррăн килнĕ чух,
„Тинех çĕнтертĕм“, тенĕ чух
Эс патăн ху çарна приказ:
„Чарас! унтан пырса çапас!“
Аслати пек хусканчĕ çар,
Тăшман таптанчĕ чăл та парр...

Çĕр çул, пин çул эс пурăн,
Хĕвел пек çуттăн курăн!
Мухтав сана, мухтав,
Эй, тав сана, эй, тав!

Çул хыççăн çул шав малалла
Эс илсе пытăн тăвалла,

Телей Сăртне хăпартрăн эс,
Кашни çынна манмарăн эс,
Таптасшăн пулчĕ те хĕн-хур,
Çĕкленчĕ çарăмăр сатур.

Çĕр çул, пин çул эс пурăн,
Хĕвел пек çуттăн курăн!
Мухтав сана, мухтав,
Эй, тав сана, эй, тав!

Çуркуннепе, йĕрки çитсен,
Кĕреççĕ çырана шывсем,—
Вăл çитĕ, çитĕ Аслă Кун,
Унчух тек юхмĕ хĕрлĕ юн,
Мĕнпур тĕнче, савăннипе,
Тав тăвĕ ăшă куççульпе.

Çĕр çул, пин çул эс пурăн,
Хĕвел пек çуттăн курăн!
Мухтав сана, мухтав,
Эй, тав сана, эй, тав!..

---

## ХĔРЛĔ ÇАР

Танкпа хирсе, таптаттарса,
Туппа персе, аркантарса,
Çӳл тӳперен—мĕкĕрттерсе,
Карапсенчен—кисрентерсе
Утать, утать мухтавлă çар,
Утать хастар, утать патвар.

Эй, хĕпĕртĕр çынсем,
Эй, савăнăр çынсем!
Кĕрле, хаваслăх маршĕ,
Сыв пултăр аслă маршал!

Кĕтсе илет хули, ял-ял,
Пуçне таять ват генерал,
Хавас кулать яш офицер,
Боец алла çупать сиксе,
Часрах çитесшĕн вăл чикке,
Чупать, перет, çитет, чикет...

Эй, хĕпĕртĕр сынсем,
Эй, савăнăр сынсем!
Кĕрле, хаваслăх маршĕ,
Сыв пултăр аслă маршал!

Эс халăх çарĕ, Хĕрлĕ çар,
Эс туслăх çарĕ, Хĕрлĕ çар,
Çапма хăватлăх пысăк сан,
Шыв таппи пек тăрать тапса.
Хыçран çапасшăнччĕ тăшман,
Ăна кӳптертĕн эс тăхлан.

Эй, хĕпĕртĕр çынсем,
Эй, савăнăр çынсем!
Кĕрле, хаваслăх маршĕ,
Сыв пултăр аслă маршал

Эс килшĕн, хиршĕн тавăран,
Эс чысшăн, ирĕкшĕн тăран,
Эс тасатан тăван çĕре,
Çанпа хавас тапать чĕре,
Çанпа та халăх юрататъ,
Пăхать, чыслать, лăпкать, мухтать.

Эй, хĕпĕртĕр çынсем,
Эй, савăнăр çынсем!
Кĕрле, хаваслăх маршĕ,
Сыв пултăр аслă маршал!

## КОМСОМОЛЕЦСЕН МАРШӖ

Пире ҫӗнӗ ӗмӗр ҫӗкленӗ,
Ҫуралнӑ эпир ҫуркунне,
Вӗрентнӗ пире аслӑ Ленин,
Кӑтартнӑ ҫӗн пурнӑҫ ҫулне.
Комсомолец, харӑс ут
Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут,
Партипе пӗрле!

Пире аслӑ Сталин ӳстерчӗ,
Вӑл уҫрӗ шкулсен алӑкне,
Атте пек пӑхса ҫитӗнтерчӗ,
Вӑл кӳртрӗ ҫӗн пурнӑҫ ҫуртне.
Комсомолец, харӑс ут,
Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
Партипе пӗрле!

Эпир ҫирӗп хурҫӑ шӑратнӑ,
Вӗретнӗ Урал чугунне,
Хастарлӑн якатнӑ, хӑпартнӑ
Ҫӗршывӑн хӗрӳ кирпӗчне.
Комсомолец, харӑс ут,
Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
Партипе пӗрле!

Тӑван пиччепе юнашаррӑн
Халь тухрӑмӑр юнлӑ вӑрҫа,
Акка-йӑмӑксем те патваррӑн
Утаҫҫӗ пӗр харӑс тӑрса.
Комсомолец, харӑс ут,
Ҫамрӑк ҫар, кӗрле!
Чӗрӳ сирпӗттӗр хӗм-вут
Партипе пӗрле!

Орлов пек эпир кисрететпĕр,
Йăтатпăр кăварлă юпа;
Матросов пек паттăр вилетпĕр,
Çăлатпăр взвода кăкăрпа.
Комсомолец, харăс ут,
Çамрăк çар, кĕрле,
Чĕрӳ сирпĕттĕр хĕм-вут
Партипе пĕрле!
Пире çĕнĕ ĕмĕр çĕкленĕ,
Пире çĕнĕ пурнăç чĕнет,
Вĕрентнĕ пире манми Ленин,
Халь Сталин пире вĕрентет.
Комсомолец, харăс ут,
Çамрăк çар, кĕрле!
Чĕрӳ сирпĕттĕр хĕм-вут
Партипе пĕрле!

---

## ВĔЛЕР НИМĔÇЕ!

(1942 ç., октябрь)

Телейлĕ эсĕ, Генрих Гейне!
Бетховен,
эсĕ те телейлĕ!
Хальхи Германие пĕлместĕр эсĕр,
Пĕлсен тăраймăттăр чĕнмесĕр.
Авал вăл кĕнеке те пичетленĕ,
Паранкă лартма та вĕрентнĕ,
Сĕтел çине чавсаланса
тĕнче çинчен,
этем çинчен
философиленĕ,
Шыранă,
иккĕленнĕ...
Халь сирĕн çĕрĕр юрă юрламасть—
вĕрет вăл йытăлла,
Халь сирĕн çĕрĕр сăвă та çырмасть—
улать вăл кашкăрла.
Философ мар халь нимĕç,
Поэт та мар халь нимĕç:
Вăл чунсăр,
пуçсăр,
вăл—салтак,
Турри халь унăн танк.
Танкпах вăл тĕнчене тухасшăн,
Тĕнче хуçи—пĕр çĕрçăтасшĕ!—
фюрер çеç пуласшăн.

Вăл Мускавра тăвасшăнччĕ парад,
Анчах Мускав хăлха чикки парать.
Хăлха чикки тыттарĕ Дон çинче,
Хăвалĕ Атăл хĕрринчен,
Хăвалĕ Ленинград панчен,
Тасатĕ Çурçĕр Кавказран...
Тараймĕ фюрер картнă шăпаран!
„Тăршшĕ—
            ик метр,
                  урлăш—
                     пĕрре
Территори кирлĕ Гитлĕре!"
Çапла каланă вата Шелепи.
Эп çамрăкки,
            вĕри сăмахăма эп шеллĕп-и!
Ылхан чĕлхи, кил ман пата!
Паян эс бомбăпа пĕр тан.
Паян поэт—йыхравçă,
                  трубадур,
Вăл лăпкă лирик мар,
                  сатур.
Фашист çине чул пек эс ӳк, сăмах,
Çитер ăна,
            çитер тăхлан çăмах!
Паян
            мĕнпур тĕнче
                  шавлать:
Вĕлер нимĕçе!
Вĕлермесен—
                  сана пăвать..
Çапла калать халь Лондон,
                  Вашингтон,
Çапла халь тилмĕрет Белград,
Хăтар тет чех,
            çăлсам тет шуйттантан.

Эй, тура, тет поляк,
                    çут кун кăтарт!
Вĕлер тет нимĕçе словак,
Ан тив тет кĕвĕçтĕр Квислинг,
Вĕлер тет нимĕçе таптаннă грек,
Ан пултăр тет пуçне çухатнă вĕçкĕн.
Вĕлер тет нимĕçе француз,
Вĕлер тет вăраннă Париж,
Вĕлер тет серб,
                    пуçна ан ус,
Хăй Берлинне салат эс пăрр!.. иш!
Вĕлер тет нимĕçе Шевченко çĕрĕ,
Вĕлер тет нимĕçе тăванăмăр Белорусь,
Килсемĕр тет Литва,
                    вилмен-ха тет,
                        эп чĕрĕ,
Часрах тет Эстони,—
                çав нимĕç майне çапса хуç!
Часрах тет тĕнче,
                эй, иккĕмĕш фронт,
Часрах тет хускал,
                    хыпалан,—
Çав тĕпсĕр хырăма тăрант:
Хыçран пырса çап,
                    хыçран!

* * *

Вуникĕ пуçлă чăшăлл!.. çĕлен пек
Европа кăкăрне ĕмет германец.
Ĕмет вăл хĕлĕпе,
                ĕмет вăл çăвăпе...
Ун мăшкăлне мĕнле хĕр манĕ?
Ун çурисем те йăшăлл!.. шурĕç
Римран,

Будапештран,
Бухарестран,
Гельсингфорсран...
Вĕсем Хĕвел çине куç усрĕç,
Кавказ патне те çитрĕçĕ шуса.
Кам чĕннĕ нимĕçе?
Кам кĕтнĕ нимĕçе?
Никам чĕнмен!
Никам кĕтмен!
Мĕншĕн юнпах вăл хĕвĕнсе
Вунтăваттăмăш çултах пĕтмен?
Мĕншĕн?

* * *

Чингис таптанă Русь хирне,
Мамай пăтратнă Дон шывне,
Анчах та ку—фашист,
Çăхан карти патши.
Вăл хураран хура,
Вăл хурахран хурах.
Хурах мĕскер?—
Кĕлет çаратнă та—вĕçтер!
А ку—хули-хулипеле вăрлать,
Ял-ялĕпе варлать,
Чышать,
пусать,
ишет,
кăвар тĕртет...
Паян
тăват çулхи ача та
Тăшман камне пĕлет,
Плакат çине пăхмасăр
Вăл Гитлер тет,
фашист тет.

Çĕрĕмĕре фашист таптать,
Таканлă атăпа таптать.
Хура лашисене
Дон шывĕпе вăл шăварать,
Вăл анлă Атăла та хапсăнать.
Çĕршыв ачи,
 чăтатпăр-и çак хурлăха?
Çĕршыв ачи,
 чакатпăр-и татах?
Пĕр пусăм та ан яр вăрхураха,
Çап хытăрах,
 тăраймаслах!
Пĕр пусăм та ан чак,
Чакать хăравçă çын анчах!
Çĕршыв ачи,—
 туркмен-и,
 вырăс-и,
 грузин-и эс,
Чăваш-и,
 мăкшă-и,
 тутар-и,
Хаяр черкес-и,
 кабардин-и эс,
е белорус-и,
 украинец-и,—пĕрех!—
 çав нимĕçе вĕлермеллех
 çапар-и!
Поэт нихçан та вĕлерме чĕнмен,
Паян чĕнет вăл вĕлерме:
Ăçта кăна çав нимĕç—мур—çитмен,
Унта—хĕнхур,
 унта—тĕрме.
Çĕршыв ачи,
Пăх çаврăнса тăван ялу çине,—
Тăван ялу вутра!

Пăх çаврăнса тăван хулу çине,—
Тăван хулу вутра!
Сана аннӳ чĕнет,
            çăлсам тесе,
Сана ачу кĕтет,
                вĕлерччĕ нимĕçе тесе.
Ăçта сан арăму?
Германире.
                Вăл чурара.
Мĕнле-ха чăттăр сан чуну,
Ăçтан хăват ан пултăр алăра!
Шакка эс нимĕçе, шакка,
Йытта шакканă пек шакка,
Ан уртăр çав шакал!
Самолётран шакка,
Пулемётран шакка,
Автоматран шакка,
Хыр тăрринчен шакка,
Гранатпала салат,
Тупăпала аркат,
Танкран ислет,
Дзотне кисрет...
Вĕлер ăна, вĕлер!
Вĕлер хăть кăнтăрла,
Вĕлер хăть каç,
            вĕлер хăть ир.
Эхер те пуля юлмасан,
            пăшал кĕпчекĕпе эс çап,
Атту кĕлипеле эс ир!
Салат унне
        пуçчашкине,
Тапаçлансан—
                эс пăв карланкине,
Вăл вилтĕр,
            вилтĕр вăл хăрăлтатса,

Хура юнне хăсса...
Çапла анчах çав инкекрен —
Çав кашкăр шăллă нимĕçрен
Эс хăтăлан,
тавран,
чапа тухан;
Çапла анчах çитет ылхан,
Çапла анчах ялна,
йышна
çăлан,
Телейле, лăпкă кун-çулна
калле çавран!

---

## УТ ПАТТĂРСЕН РЕТНЕ!

Юлташ, çĕршывшăн, чысшăн
Ут паттăрсен ретне!
Этем асси — фашизм
Варлать çĕршыв питне.

Вăй хускалтăр тинĕсĕн,
Тухрăмăр, çул пар пире!
Хамăр çĕршыв никĕсĕ
Хамăр савнă партире!

Авал çапла çĕкленнĕ:
Хăруш кунсем килсен —
Çил пек ут йĕнерленĕ,
Хĕç тытнă паттăрсем.

Çиçнĕ хĕçĕ çиçĕмĕн,
Тимĕр хĕрнĕ алăра:
Хамăр çĕршыв никĕсĕ
Хамăр йышлă халăхра!

Пире Октябрь пилĕ
Çĕклерĕ вăй парса.
Нацизм пĕтĕ, вилĕ,
Йăванĕ арканса.

Кун хăпарĕ, тикĕсĕн,
Хăртмĕ кăвак тар хире!
Хамăр çĕршыв никĕсĕ
Хамăр Хĕрлĕ армире!

Кам ирĕке юратнă,
Ут паттăрсен ретне!
Кам вут ялав вылятнă,
Сыхла телей çĕрне!

Вăй хускалтăр тинĕсĕн,
Тухрăмăр, хĕвел тăрать:
Хамăр çĕршыв никĕсĕ
Хамăр тăван Сталинра!

1941 ç.

---

## ЯЛАВ

(Ирĕк сăвă)

Варкăшать ялав.
Пĕтĕм площăте
хĕрлĕ тĕс çапса чӳхенет.
Вĕр,
декабрь çилĕ,
вĕр!
Варкăш,
ялав,
хĕрлĕ ялав!

Сана
    Париж коммунарĕсем пĕветнĕ
Хĕрлĕ юнпа,
Барикада çинче ыталанă
Сыв пул Революци, тесе.
Сана
    çĕкленĕ Питĕр,
Ик пуçлă ăмăрткайăк сехĕрленнĕ.
Эс тухрăн тăвăл витĕр,
                    вут-хĕм витĕр...
А эс çаплах чӳхенен,
                    çĕре ӳкмен.
Сана
    ылханнă,
            вăрçнă,
Хаяр çилсем туланă,
          шăтарнă пуля...
А эс çаплах
       авăнми шĕччӳ çинче
Варкăшатăн,
    хĕрлĕ тĕс çапатăн.
Сана
    Аврора матросĕсем йăтнă,
Ялкăштарса.
Керенскине тытнă та ывăтнă
Министр тенкелĕ çинчен.
Ак чĕрĕк ĕмĕр вĕçрĕн,
                çиçрĕн,
чĕнтĕн,
    хавхалантартăн,
Хасанпа Халхингол,
Фин вăрманĕ таран
Хĕрлĕ тĕс картăн,
      хумхантăн.



ЧУВАШСКАЯ
КНИЖНАЯ ПАЛАТА
г. Чебоксары Чувашской АССР

Варкăш,
ялав,
хĕрлĕ ялав!
Вирлĕн çӳре,
хĕрлĕ тĕс çап!
Варкăш,
ялав!
Эсĕ—салтак аллинче,
Гвардеец аллинче.
Çит
Ялтан
яла,
хуларан
хулана,
Чи çӳлĕ çурт çине хăпар,
Тарт нимĕçе,
тарт!
Хумхан,
ялав,
хĕрлĕ ялав—
Совет çĕрĕн чапĕ,
чысĕ,
мухтавĕ!
Таптантăр хури—
фашист аллинчи,
Йăвантăр йăвинчен
эрешменĕ,
Ан лартăр вăл шĕччи çинче,
вăл ӳктĕр çĕре,
Ан пултăр чуралăх эмблеми!
Варкăш,
ялав,
хĕрлĕ ялав!
Хĕрлĕ тĕс кар
çĕр чăмăрне!

Варкӑш,
хумхан,
чӳхен
Ленин ҫӗкленӗ ялав!
Варкӑш,
хумхан,
чӳхен
Сталин йӑтса пыракан ялав!

Декабрь, 1942 ҫ.,

## ХУЛА
(Ирӗк сӑвӑ)

Шавлать,
кӗрлет,
юхать,
васкать,
ӗҫлет хула,
Шавлать,
кӗрлет,
юхать,
васкать,
ӗҫлет вӑл вӑрҫӑлла.
Кашни кӗтес,
кашни урам,
кашни площадь йыхӑрать.
Тылри этем сӑнать,
туять, курать.
Урам урлах плакат,
плакат ҫинче ҫыру:
„Вилӗм
нимӗҫ оккупанчӗсене!“
Сад.
Хӑма сапур.

Ик аршăн тăршшĕ паллă кăшкăрать:
„Гитлеризм
тĕп пултăр!"
Керетĕн площăте:
Хапха пек пир çинче Суворов—Улăп,
Хăй тимĕр-кăвак утпала вĕçет,
Атсемĕр, тет,
чĕнет:
„Çап,
чик,
хăвала,
ил тыткăна!"
Чапаев çивчĕ урхамах çинче.
Вăл çил пек ыткăнать,
Вĕçет ун бурки,
çиçет ун хĕçĕ:
„Кас,
тура,
Ўксессĕн те
пуçу сан ўктĕр малалла!"
Кутузов Наполеона хăвать.
Донской Дон хĕрринче
Мамай çарне таптать.
Мухтавлă вырăс Минин
Эй, вырăссемĕр, тет,
пуçтарăнăр çĕршерĕн,
пинĕн,
Руçшăн тухăр,
хĕç шăратăр,
ылттăн пухăр!
Ав, Щорс пырать çĕмĕрттерсе.
Махно,
Петлюра мурĕ чалпăр саланать.
Киле тармашкăн çул хăвар, тет, нимĕç.
Богун ятне çĕртмен! тет богунец,

Çулу сан масара, подлец!
Лазо çӗкленӗ Çӗпӗр тайгине.
Тарать япун,
    хыçран ури çапать çат-çат.
Юнать, ав, Невский паттăр:
        „Кам килнӗ вырăс çӗршывне
        хӗç хăйраса,—
        пуçне пӗр хӗçех таттăр!"
Мухтавлă—ӗлӗкхи,
    чаплă—паянхи.
Художник чăнлăха ӳкерме çуралнă.
Сăрла,
    сăрла!
      А сăвăç—
        юрла!
Ак çурт çамки.
    Фанер хăми тăрать,
      çӳллӗш—хăлаç,
        урлăш—хăлаç.
Вут.
    Тӗтӗм.
      Çăлтăрлă танк пырать.
Тапта, хура таракана, тапта!
А шухăш калать!
        „Вăхăт—
        çынна тӗрӗслет,
        танксен йышне хушма
        эс пулăш патăн-и?"
Хаяр та хăруш бомбовозăн кӗрлевӗ.
Вӗсен карти хӗвеланăçнеллеваскать.
Шухăш калать:
        „Çунат çумне çунат хушма
        эс хатӗр-и?"
Магазин чӳречи.
    Плакат хушать:

„Ан шарла!“
Шухăш калать:
„Çыртас çĕрте
эс çыртрăн-и ху чĕлхŭне?“
Хапха.
Хапха çинче ўкерчĕк:
фриц
хĕрарăма хĕсĕрлет,
ачине—
шыва перет.
Шухăш калать:
„Çĕлен!
А ун пуçне татма
эс алă йăтнă-и?“
Хирте боец выртать.
Хăмач хăййи пек юн тапать.
Ыйтать сан шухăшу:
„Эс донор-и?“
Кĕретни кинона,
театăра —
Эс вăрçă сывлăшне сисетĕн.
Иртет авто,
чупать трамвай...
Плакачĕ кăшкăрать:
„Арисца вĕлер!“
Килет колхозник вутă тиесе,
Пĕкки çинче çыру:
„Тылла, колхозник, нимĕçе!“
Шавлать,
кĕрлет,
юхать,
васкать,
ĕçлет хула.
Шавлать,
кĕрлет,

юхать,
васкать,
ёçлет вăл вăрçăлла.
Çар хатĕрлет.
Штык çумне штык
вăрман пек çĕкленет.
Ура пусси —
урамĕ чĕтренет.
Шинель тумланнă хĕрупраç
Юрра шăрантарать.
Ай, уçă сас!
Ай, çивчĕ сас!
Эс илтнĕ-и оркестр кĕввине?
Айху пулсан —
эс вăранан,
Вăй пулмасан —
эс вăй илен,
Пуçна çĕклен,
нăкрах ярса пусан.
Пăхатăн çын çине —
васкав,
ĕç шухăшĕ тăрать сăн-сăпатра.
Пусать вăл çирĕппĕн.
Халех ун пулмалла учреждение
е саватра. —
Якал,
якал эс, пуля!
Шăран,
шăран эс, тупă!
Ирĕк пулĕ,
тăшманшăн —
тупăк.
Ав, батальон утать вокзалалла.
Умра —
автомат.

Харăс-харăс алă сулланать,
Тăрăс-тăрăс урам кисренет.
Малта музыкантсем.
Ак вăрçă маршĕ сывлăша çурать:
Эс çӳçенсе илен,
 эс çĕкленсе каян.
Сан юнашар тăрас килет,
 юрлас килет,
 пĕрле утас килет.
Çип çапнă пек ĕрет.
Пĕр харăс алă сулланать,
Ура пĕр харăс пусăнать.
Çынсем,
 хăйсен çулне манса,
Утаççĕ батальонпала,
Хĕрсем,
 куçĕсене шăлса,
чечек параç капитана.
Сисетĕн-и,
 сисместĕн-и—
 шур тутăр кăларан,
Куçран çухаличчен суллан:
 „Çитес çĕре çитме—
 çул пултăр!
 Килес çĕре килме—
 çул пултăр!"
Пăхатăн каялла:
Çаплах шавлать,
 кĕрлет,
 юхать,
 васкать,
 ĕçлет хула,
Çаплах шавлать,
 кĕрлет,
 юхать,

васкать.
есլет вăл вăрçăлла.

Ĕçле,
хула,
ĕçле!
Хатĕрле
снаряд,
пуля,
тупă шăрат!
Сан бомбовоз—караппăл
мĕкĕрсе хăпартăр,
Сан истребитель—хурчăка
Тăманана—„Мессершмитта" персе антартăр.
Танксем васкаччăр харрăн,
Лучăркаччăр фрица хаяррăн!
Шăпланĕ хурçă шавĕ,
Эс мирлĕ тум тумланăн,
Каллех ятташ çине ятташ хăпартăн,
Чĕр хурăн çумне хурăн лартăн.

Август, 1942 ç.

---

## ГИТЛЕР ÇАМКИ ÇИНЕ

Эс тивĕç мар сăвва,
санпа калаçтăр тимĕр,
Миммӳ пăтрантăр,
пултăр мимĕр.
Наполеон пек каçăртрăн пуçна,—
Тĕсне курсан та сурĕччĕ вăл лач!
Çĕр йышăнмĕ хурт çинĕ шăм-шакна,
Палач!
Хальччен вăл çуратман сан пек пуçтах,
Атту тĕпне çулатăрах Петэн.

Марат йăхне эс тăллас çук çапах,
Çĕлен!
Кушак пек çитрĕн Осло хулине,
Афина кăмрăкланчĕ вут сапсан.
Чĕркуçлантартăн-и славянсене?
Сăпса!
Асапланать Европа ахлатса,
Тĕпренчĕкпе тумлам таран сăхан.
Кунта та сĕкĕнтĕн кăранклатса,
Çăхан!
Калле тухаяс çук!
Çул тупаяс çук!
Эс хушăн ху вил шăтăкне алтан,
Сана никам, нихçан каçарас çук,
Калта!
Эс çын пусма хăйрарăн тимĕрне,
Вара, кĕтмен çĕртен, сасартăках
Сас-чӳсĕр тапăнтăн шăп ир енне,
Хурах!
Куççуль шапăртатать,
юн сăрхăнать...
Чĕрӳ сан чул,
пăяв та саншăн шел!
Сана, сана этемлĕх айăплать,
Эсрел!
Çамку çине çак сăвă—кĕлеме!
Вулатăр халăх,
суртăр лач та лач!
Шалçу сан тулĕ!
Тивĕç кĕлленме!
Палач!

1941 ç.

# ЮЛАШКИ СЕХЕТ

Ют алăран тăпăлтарса,
Чĕрнисене касса татса
Хула илет-и Хĕрлĕ çар,
Ял-ял илет-и Хĕрлĕ çар,
Пĕр утăм çеç ярса пусать-и,
Пĕр метр çеç вăл тасатать-и —
Савăнатăп,
Кăшкăратăп:
        Пыйтлă çарăн —
        Вăрхурахăн,
        Кранк! çăханăн —
        Хурчăканăн,
        Çĕрçăтманăн —
        Хурт-ăманăн
Вил сехечĕ çывхарать!
Çурçĕрелле кашни кĕтет
Çӳçентерсе яран сасса,
Сехет çине пăхса илет,
Часрахчĕ, тет, иççăмасса.
Сехет ĕçлет тик-так, так-так,
Юлташ, кĕтсемччĕ, тет, пĕртак.
Çитет, çитет
        вуник сехет,
Илтетпĕр диктор сассине
(Вăл пирĕн пекех мĕн васкав):
— Калаçать Мускав,
        калаçать Мускав!
Паратпăр, тет,
        Совет
Информбюро пĕлтерӳне...
Чун лăшт каять.
Каллех телейлисен йышне —
Пĕр семьене

Хули,
сынни,
ял-ялĕ таврăнать,
Оккупантсен —
Чун иллисен
Пĕтес сехечĕ çывхарать.
Çывхартăр çав сехет,
çывхартăр
Минутласа,
секундласа!
Кашни каçах,
кашни ирех
янравлă сасă:
„*Юлашки сехетре*“, тесе калатăр
Чун-кăмăла çунатласа.
Çиттĕр фрицăн юлашки сехечĕ,
çиттĕр!
Ĕмĕрлĕхех фашист сехмечĕ
Çĕр питĕнчен çухалтăр,
çĕттĕр!

Февраль, 1943 ç.

---

## СТЕПАН ВОЛКОВ КАЛАСА ХĂВАРНИ

Ăçтан вăл?
Кам?..
Çырман хаçат.
Пур ят,
пур хушамат.
Хăш халăхăн ачи?
Пĕлместĕпĕр.
Пĕр мар-и çак?
Вăл пулнă чикĕ хуралçи,
А вăрçă тапрансан — салтак.

Вăл çапăçнă.
Вăл чăмнă вут ăшне.
Тăшман пăван пек явăçнă,
Хăйранă йĕс шăлне,
Шăл çине шăл!
Степанăн та măка пулман.
Самант
вăл хушнă: „Тимĕр шăпăр,
шăл!"
И шăлнă автомат.
Пĕрре, пулас атака умĕн,
Тем ларнă Волков кăшт салхулăн,
Тем çырнă вăл блок-нот çине.
Вăл татнă та ун листине
Пытарнă медальон ăшне.
Хускалнă батальон.
Васканă малалла.
Приказ: „Яла
йышăнмалла.
Парăннине —
плена илес,
Хирĕççине —
кĕрслеттерес!"
Юлташсемпе
малти ретре Степан.
Шартлаттарать тип аçа пек,
Сапать,
сапать тăхлан.
Çĕр макăрать.
Лерен те тимĕр çутарать.
Дзотра ларать иккен арлан,
Шарлантарать пулемĕтран.
Аха!
Апла çакна çисе пăх-ха!..
Степан выртать.

Вăл хăвăрт-хăвăрт малалла шăвать,
Кăшт çĕкленет,
Çине çинех гранат перет.
Дзот — сасăсăр,
Выртаççĕ нимĕççем урасăр,
                                                алăсăр.
Сыхлан,
                    Степан,
Тайкаланса тухать штабист.
Степан тĕллет,
                    тĕллет фашист.
Ик автомат кĕрлет...
Пĕтет тăшман.
                                Куçне хупать Степан.

---

Яла тасатрĕ батальон.
Туссем çĕклеç тусне.
                    Çумра ун медальон.
Вăл çырнă пĕчĕк хут çине:
„Юлташăмсем!
Тен чĕрĕ тухмăп çак çапăçуран,
Тен ӳтĕм урлă каçĕç калтасем...
Çапах та калăр:
                    —Волков парăнман,
Вăл курайман çак çич юта.—
Тата
Мана хисеплĕр коммунист тесе.
Сыв пултăр халăх,
                    Сталин сывă пултăр!
Аркантарса та кисретсе
Хĕвеланăçнелле çул тытăр.
Салам Таръеçĕме,
пепкеçĕм Таня хĕрĕме".

---

Ăна пытарнă ял хыçне,
Пĕр çӳллĕ ту çине.
Ан тив çав пĕчĕкçĕ тăпра
Аса илтертĕр паттăра.
Пуçне тайма пыни калатăр:
„Çывăр, харсăр.
Никам та çĕнес çук сан халăхна,
Ахаль вăл çуратман сана“.

## ТИТЕНКОВ МУСКАВА СЫХЛАТЬ

### I

Вăр-хурах
            çӳрет çĕрле анчах.
Пĕрре çапла Мускав çине
Пĕр сывлăшри пират —
            пĕр „Юнкерс“ пырать.
Çитет, —
лекет
            прожектор хĕскĕчне.
Чул пек чăмать,
            çĕмрен пек хăпарать,
Анчах прожекторĕ ямасть,
Объект тупма памасть.
Ват ăмăрткайăк пек хăватлăн
Çĕкленчĕ пирĕн Титенков,
Ун самолечĕ çил çунатлă,
Вăл тапăнсассăн — чăт кăна!
Кĕскен кĕрлерĕ вут таппи:
Хăяккăн тӳнчĕ йыт хапи.
Маттур, Титенков, маттур:
Пиратăн хыпать
            сылтăм мотор.

Ăван пек ăнлатса
Тăшман çапах вĕçет,
Бомбисене
вăрман çине
тăкса
Тарма ĕмĕтленет.
Апла тарма тăратăн-и!
Хăратăн-и вутран!
Титенковран таратăн-и?
Тараймăн эс унран!
Тепре кĕрлерĕ вут таппи:
Пиратăн тулчĕ те шăпи.
Вăрман çине вут хыпнă „Юнкерс"
ўкрĕ кĕрс!..

II

Пĕрре çапла,
тăр кăнтăрла,
Пĕр „Хейнкель" çула тухать,
Мускав енне вăл çул тытать.
Асар-писерĕн мĕкĕрет,
Автоматран вут пĕрĕхет.
Мĕнчуль
куççуль
Вăл çăтнă пуль,
Мĕн чухлĕ чун
Вăл татнă пуль,
Мĕн чухлĕ юн
Тăктарнă пуль!..
Çак ĕмĕтпех Мускав çине
Вăл пăрахасшăн бомбине.
Анчах та Титенков сăнать,
Вăл ухă евĕр улăхать;
Хуса çитет те, пирата

Вăл куçма-куçăн тăрататъ.
Пират
Чакать те, таптара паратъ.
Тарма тăратăн-и!
Хăратăн-и вутран!
Титенковран таратăн-и?
Тараймăн эс унран!
Кĕскен кĕрлерĕ вут таппи.
Хăяккăн тӳнчĕ йыт хапи.
Маттур, Титенков, маттур:
Пиратăн хыпать
сулахай мотор.
Тип кустăрма пек хăйнклатса
Хăяккăн „Хейнкель“ тарать.
Вăрман çинче вăл хаплатса
Арпаланать те —
кĕл пулать..
Мухтав сана, халăх ачи!
Мухтав сана, Мускав хуралçи!
Ĕмĕр ан сӳнтĕр чап.
Татах сĕкĕнсен —
тата хытă çап!

1941 ç.

---

## ĔМĔТ

Юлă кăмăл — таврăнать,
Кĕтнĕ ĕмĕт — чăн пулать.

(*Фольклортан*).

Йĕрки çапла сĕм авалтан:
Çут ĕмĕтрен,
ыр кăмăлтан
Поэт
шур хут илет,

Çыру сĕтел умне ларать,
Чавсаланать те тытăнать
Сăвăлама,
Çап-çамрăк çĕн çула саламлама.
Юлташ!
Çак хĕрĕх виççĕмĕш çулта
Ан пултăрччĕ фашист сăмах.
Çул варринче,
е вĕçĕнче
Вăл пултăрччĕ юмах!
Манар вăл сăмаха,
манар,

Аса килсессĕн те—
Шăла çыртса кăна калар.
Вăл ӳчĕпех пытантăр çĕр айне,
Хурт çисе ятăр шăммине,
Хĕлхем çулатăр хĕресне,
Çил шăлса кайтăр ун кĕлне.

Хирти танксен шăмми-шакки,
Фашистăн çĕлĕкĕ—каски
Шăрантăр усăллă хурçа.
Çич çул ачи шик! шăхăрса
Шакăрккасем пуçтартăр тĕлĕнсе,
Васкатăр музее хĕпĕртесе.

Канса сывлатăрччĕ уй-хир.
Пуç устăр пăхăр вир,
Кашлатăр кĕмĕл тулă,
Ырашĕ ылттăн хумлăн
Хумхантăр Латвимĕр таран.
Карпат таран
ешер эреш çаран!

Сар ырă шăршă, утă,
Пул выльăх-чĕрлĕх тутă!

Эс пул:
пĕр вĕçĕ—
картара,
теприйĕ—
çырмара.
Ĕшне тулли сĕрлетĕр хурт.
Шетник тулли вĕретĕр пыл-сăра.
Хăни-вĕрли пуçтарăнтăр.
Кĕрлетĕр пӳрт,
Килпуçĕ йăттăр алтăра.
Кĕрекене
Туссем васкаччăр вăрçăран,
Аллисене
Сарса кĕрейччĕр хапхаран.
Килменнине—
Хура çĕр çăмăл пултăр,
Ачисене—
Çĕршывмăр ашшĕ пултăр.
Çĕнтернĕ ятпала
Прачник пуçлатăр халăх,
Ташлатăр савăнмалăх,
Пĕр çын ан юлтăр чаплă ĕçкĕрен.
Кайран каллех вăл тыттăр мирлĕ ĕç-йĕре.
Поэт
çапла ĕмĕтленет.
Çаплах эс пул,
Çĕн Çул!
Туссем,
Йăласене хисеплесе,
Черкке йăтар-и кĕçĕр?
Эль кĕтĕç-и вĕсем?
Тăшманĕ сĕмсĕр,
Çук,
Çут черкке мар,—
Тăват кĕтеслĕ штык йăтар!

# КИЛĔ РОБЕСПЬЕР

(Асаплă Франције)

Сана чĕркуçлантарчĕç, сутрĕç...
Камсем?
        Ютсем-и?
                Çук,
                    ху çыннусем!
Виши диванĕ çине путрĕç
Эс суйлаған министрсем.
Эс çапăçма та пултараттăн,
Çĕнме те пултараттăн эс.
Анчах та вăрттăн çĕçĕ лартнă,
Амантăн эс,
        юнлантăн эс.
Ăçта вĕсем—
            ывăлусем?
Концлагĕрте!
Нумайăш çук.
    А ыттисем?—
Йĕреççĕ саншăн ют çĕрте.
Париж, Париж!—
                Унта халь нимĕç.

Версаль, Версаль! —
Унта пруссак.
Вӗсем, вӗлермесессӗн,—вилмӗҫ,
Вӗсем кулаҫҫӗ и-ха-хак.
Ахӑлтатаҫҫӗ йӑлунтан,
Янравлӑ, ҫепӗҫ чӗлхӳнтен.
Сиксе чӗтреҫҫӗ
авалтан
Ҫавра ҫилсем ҫӗкленинчен.
Вӑл килӗ,
килӗ Робеспьер,
Вӑл ҫӗклеттерӗ пурттине,
Вӑл калӗ:
„Ютсене—
ҫакса вӗлер,
а сутӑнчӑксене—
ав, эшафот ҫине!"
Ҫакна тен сисрӗ пуль Дарлан,
Колоние вӑл тарчӗ пӑрахса,
Такам કаларӗ:
„Ак, тӑхлан!"
Дарлан ҫине пӑшал йӑтса.
Эс шантӑн ват салтак ҫине,
А вӑл—салтак чысне ҫухатрӗ:
Берлин енне
вӑл тӑсрӗ аллине,
А сан тавра гестапона тӑратрӗ,
Сан пурччӗ ют кӗмен ҫӗрӳ,
Ӑна та сутрӗ ҫав Лаваль.
Сисетӗп, ҫурӑлать чӗрӳ.
Эс тавӑрӑн,
хӑвармӑн эс ахаль.
Каллех мӑнкӑмӑллӑн ҫӗкленӗн,
Тасатӑн эс тӑван ҫӗрне.
Кунҫулӗ вӑрӑм мар эсрелӗн,

Час тухӗ вăл тӗнче сутне.
Ҫӗрне тытма эс лартăн ывăлна,
Ҫӗршыв хуҫи сан—халăх пулӗ.
Унчух ылханмăн шăпуна,
Унчух тăшман нихҫан та кулмӗ.
Уяв тума эс тухăн Марс хирне,
Пуҫа пӗксе тăракан марччӗ эсӗ.
Ыталӗ савнăҫ ывăлна-хӗрне,
Пур Франци тăрăх кӗрлӗ Марсельеза.

---

## ТУЛОН МАТРОСӖСЕМ

Тулон ҫыранӗ чӗрӗ юнлă...
Турпас та тимӗр ҫапăнать...
Вăтаҫӗр тинӗсӗ салхулăн
Хум хыҫҫăн хум йăвантарать.

---

Старик сутасшăнччӗ флота
Богема шпионне—
хав-хав йытта.
Ҫӗкленчӗ сас.
„Патриотсем,
Шеллемӗҫ матроссем
динамита!"
А тинӗс тӗпӗ тарăн, тарăн...
Хӳтле, ҫӗршыв, хумусемпе витсе.
Лараҫ хăрушшăн та хаяррăн
Вăрҫă карапӗсем сигнал кӗтсе.
Рейдран тухма тен майӗ пур-тăр?
Тухаймăн тимӗр кăшăлтан.
Тăват енчен тӗлленӗ фюрер
Тупăсенчен те пăшалтан.

„Ун аллине ҫакланиччен
Путах-и флот,
　　　　　　　　путатпăр хамăр та...“
Каять ҫак сас линкорсенчен.
Сирен улать те макăртать.
Сывпуллашать экипажпа ҫум экипаж.
Карапĕ шел,
　　　　　　кунҫул татах та шел.
Матрос йĕрет.
　　　　　　„Сывпул, юлташ!“
Леш ответлет:
　　　　　　„Сывпул, Мишель!“
Асар-писер аҫа шартлатрĕ,
Вулкан пек тапрĕ шыв,
　　　　　　ҫĕкленчĕ тар шăрши...
Куҫҫулĕн макăрчĕ,
　　　　　　ташман енне юнарĕ
Вăранакан ҫĕршыв.

Хумхан, Вăтаҫĕр тинĕсĕ, хумхан.
Салхун ҫĕкле ту пек хумусене,
Тап ҫырана,
　　　　　　вĕре те кăпăклан,
Вит хăйăрпа матрос виллисене.

Ноябрь, 1942 ҫ.

## ПĂР ÇИНЧИ ÇАПĂÇУ

(1242-мĕш çулхи çуркунне)

Тумла тумлать шур чул хӳмесенчен,
Йăва çаврать ир килнĕ кайăк.
Хуралçă пăхрĕ башня тăрринчен:
Кунсем патвар. Илемлĕ. Лайăх.
Туллин сывларĕ Аслă Новгород.
Пĕр хĕвĕшет ватти-вĕтти.
Мĕн пулнă-ши? Вăхăчĕсем кăра!
Пуçне усмарĕ вăй-питти.
Пĕр мĕкĕрсе кĕрлерĕ вече чанĕ,
Хула хускалчĕ, утрĕ князь патне.
Урра кĕрлевĕпе пĕрлешрĕ пăхăр янĕ,
Пӳ пĕкрĕ халăх, илчĕ çĕлĕкне.
Пуç тайрĕ Александр:
„Аслă Новгород йышĕ!
Вăрçăпала шăвать хура çĕлен.
Русь чысĕшĕн,
ачи-пăчишĕн,
хирĕшĕн
Хăруш вăрçа çĕклен!
Ан астăр нимĕç-рыцарь,
Ан сысналантăр путсĕр!
Кистенпеле çапсан—
çамки салантăр,
Сăнăпала чышсан—
пырши арпаштăр!“

Чавка ваййи вылярĕ çĕлĕк,
Хаяр сăн çиçрĕ питсенче.
Нимĕçсене тĕлленнĕ тĕлĕк
Арканĕ Чудь кӳлли çинче.
Вĕркĕчĕсем ырми хашкарĕç,
Хĕрелчĕ хурçă вучахра,
Тимĕрçĕсем шак-шак шаккарĕç,
Вылярĕ тимĕр алăра,
Вылярĕ... Тухрĕ Александр,
Унпа пĕрле çĕкленчĕ Русь,
Чудь пăрĕ кăн-кăвак,
тăшман кĕрсен—салантăр,
Вăл путтăр авăра,
путманнине пĕр çап та хуç!
Тăшман васкавлăн сысналанчĕ*
Сăмсалала хайăрттарма.
Вара... вара хускалчĕ,
Тапранчĕ вырăс авăртма.
Сăмса çине пусать князь Александр,
Аяк пĕрчисене—суйлаç юлташĕсем.
Пăр чăтаймасть, путаççĕ пăкăр-пакăр
Чугун тумланнă рыцăрьсем.
Чакасчĕ каялла—
хыçран та
Александр
Хӳре çине пусать;
утасчĕ малалла—
малтан та
Александр
Кăвак пăр çинче çеç ташлаттарать.
Утсем шарри çеç кĕçенеççĕ,
Хĕçсем ванаççĕ чанклатса.

* Нимĕçсем атакăна треугольник пулса кĕнĕ, çавăнпа вĕсене вырăссем „сысна“ тенĕ.

Хай рыцарьсем
утсем çинчен
чикеленеççĕ,
Юн пĕрĕхет чăрăхлатса.
Чудь пăрĕ йăмăхрĕ, хĕрелчĕ,
Вăл выран-выран ванчĕ лаплатса:
Сысналанан калта тĕпленчĕ
Чудь кӳллинче, пакăртатса...

Чавка вăййи вылярĕ çĕлĕк,
Хаяр сăн çиçрĕ питсенче.
Нимĕçсене тĕлленнĕ тĕлĕк
Арканчĕ Чудь кӳлли çинче.

---

## ВЫРĂС САЛТАКĔ

Георги çиçнĕ кăкăрĕ çинче.
Вăл хăраман французсенчен.
Вĕсем шăп вăтăрăн,
ак ку пĕччен,
Çапах та парăнман вăл ӳкиччен.
Пĕр вилĕмрен хăтăлас çук,
Нихçан та иккĕ вилес çук,—
Тесе тытать вăл пăшалне,
Куç хупиччен майлам, тет, вуннăшне.
Штыкпа та картечпа,
Хĕçпе те прикладпа,
Приклад вансан—
чулпа
Кĕрешнĕ тăшманпа.
Француз кулма,
шăлне йĕрме ăста.
Пĕри шӳтлет:
„Эй, чарăн, араслан!

Мăю—кучан.
    пуç—купăста,
Мĕн мĕлке пек хăлаçланан?!"
Илтмен,
    чĕнмен салтак.
Вăл сулнă çеç:
    „Пушаршăн—ак!
Кĕлет çаратнăшăн та—ак!
Йӳн терĕр пулĕ пирĕн хак".
Урса каяççĕ французсем...
Вунçич суран салтак çинче.
Çапах лармасть чĕркуçленсе,
Çапах çапать,
        çапах ура çинче.
Ун умĕнче çич гренадĕр выртать,
Ак тепĕри персе анать...
Вунсакăр хут суранлансан—
Салтак ӳкет ăн çухатса.
Гренадĕрсем шалт тĕлĕнеç,
Герой çине ал çĕклеймеç.
Ăна леçеççĕ Бонапарт патне.
Ак тамаша!
    Наполеон
        çак вырăс салтакне
Хисеплĕ Легионăн орденне
Парнелесе парать.
Французсене калать:
— Çапла вăрçсан—
        никам та çĕнес çук,
Вăрçаймасан—
        пăшал та тытас çук!
Халь кай килне,—
Хушать вăл вырăс салтакне,—
Анчах ятна кала.

Салтак:
Гвардеец Коренной.
Наполеон:
Герой!
Салтак:
Эп вырăс.
Мускав çине ан пыр эс!

---

## НАПОЛЕОН ТАРНИ

(1812-мĕш çул, декабрĕн 5-мĕшĕ)

— Эй, маршăлсем!
Ма пуçăра усатăр?
Ман каймаллах.
Эс маншăн юл, Мюрат.—
Хресчен çуни çине ларать те император
Российăран хăй Францине тарать.
Çĕрле тарать.
Ку саншăн мăшкăл, намăс.
Тарать вăл аслă çулпа мар,
кĕçĕннипе.
Эс ӳлĕмрен нихçан та чикĕ ан пăс,
Рехмет кала сыв юлнипе.
Пуçне салхун усать диктатор.
Куçне шур юр çиет,
питне тарни хĕртет.
Ăçта сан Индийӳ?
Вăл аякра-тăр.
Российăран çул çук иккен,
ямасть иккен.
Çур çул та çук:
вăл Немăн урлă каçнă,—

Халь каялла,
вĕçет вăл килнелле.
Тăватçĕр пин салтак çĕре вырнаçнă
Пĕр сăхă çын хушнипеле.
Çĕр çавраka,
вăл чăмăр.
Пĕччен алла кĕмест иккен.
Çĕкленнĕ халăх çутарать иккен
кăварлă çăмăр,
Ют çар килсе кĕрсен.
Салхун усать пуçне диктатор,
Путать вăл тарăн шухăша:
„Империйĕм халь арканать-тĕр..."
Юртать, юртать шăнкравсăр пар лаша.
Аса илет:
Июнь.
Ун аслă çарĕ
Васкавлăн каçрĕ Неман ку енне.
Малтанах ăнăçсăр:
пушхир пек ыталарĕ
Раççей уй-хирĕ Бонапарт çарне.
Тем пысăкăш вучах пек ăшалать
хĕвелĕ,
Çăлкуçĕнче,
Çырмасенче те шыв типсе пырать,
Ăçта кăна
ан хыв куçна,
ăçта та вут хĕлхемĕ,
Вăрман
йăсăрланать,
капан
мăкăрланать.
Çапла кĕтет иккен Раççей.
Смала пек тĕтĕм витĕр
Ним курăнмасть.

Малта—тӳпе таран кăвак ăрша.
Çанталăк та калать пек: „Вилĕр!"
Вăрçа кĕмесĕрех ӳкет салтак,
тӳнет лаша.
Аса илет:
Бородино.
Ик тăвăл хире-хирĕç
Чакас çукла пырать те çапăнать.
Пĕрне-пĕри турарĕç, хирчĕç...
Анчах француз ялавĕ усăнать.
Аса илет:
Мускав пушарĕ.
Скифсем тесе вăл вăрçнă ун чухне.
Тавру хаярлăхĕн кăварĕ
Сюртукĕ витĕр витнĕ чĕрине.
Аса илет:
Багратион,
Барклай,
Кутузов,—
Вĕсем
çар чунĕсем иккен!
Вĕсен чи шанчăклă,
чи çывăх тусĕ
Чукмар çĕкленĕ халăхсем.
Аса илет:
Давыдов,
Дорохов,
Сеславин,
Фигнер,—
Вĕсем
хаяр партизансем иккен!
„Кун пек çĕре килнишĕн ӳкĕнĕр...—
Пăшăлтатать вăл, куççульпе йĕрсе.—
Унта хĕрарăм та—
пĕр карчăк Василиса—

Лăш сывлама памарĕ ир те каç.
Яла кĕрсен те—выç вилес сан...
Вĕсем таврас,
вĕсем таврас..."
Пасарнă мăшăр ут юртать.
Куслаçă—гренадĕр чĕн пушине чикмест.
Хула, ял хыççăн ял юлать,
Анчах диктатор ним чĕнмест.
Шухăшĕнчен вăранаймасть,
Лăпланаймасть
суран.
Вăл лашапа. Чĕри выртмасть.
Лере—инçе, инçе—
çар ванчăкĕ аран-аран
сĕтĕрĕнет çуран.
Ăçта-ши свити?
Вата гварди?
Смоленск таврашĕнчи шур юр çкиче,
Березина авăрĕнче!
Вĕсем чи шанчăклă хуралççĕ,
вут-кăварччĕ...
Вĕсем халь çук,
вĕсем халь çук.
Халь полководец тăр пĕччен.
Вăл шухăшласшăн мар.
Хăрушă.
Вăл манăçасшăн.
Шлепки урлах уртать вăл тилĕ тăлăпне.
Анчах та сивĕ—хĕл аслашшĕ
Асилтерет Раççей шартламине.
„...Ман çарăм выçă кĕтӳ евĕр чакрĕ.
Пин-пинĕн мародĕр,
пин-пинĕн дезертир,
Кутузов çапрĕ,
сив хĕл çапрĕ.

Писев тум тӑхӑнчӗ шур хир...
Кутузов ҫапнӑ,
сив хӗл ҫапнӑ...
Ҫӳхе мундирлӑ выҫ салтак
Лаша пусса—ун хырӑмне вырнаҫнӑ,
Сехет—вӑл хытнӑ кӑнчӑрах...
Ӑҫта кӑна ан пӑх:
йӑваланать пӑшал,
кунта ак тупӑ,
Пас тытнӑ хуҫӑк хӗҫ йӑлтӑртатать.
Ӑҫта кӑна ан пус—
ют ҫаршӑн тупӑк.
Хуҫи ҫеҫ мар-мӗн,—
ҫӗр те ылханать.
Березина ҫинчен вӑл асӑнасшӑн мар.
Березина вӑл Дунай мар,
Березинах.
Ун авӑрӗ, ун сӗлтӗшӗ хаяр,
Вӑл ҫӑтнӑ-мӗн пин-пин хурах ҫынна.
Кун пеккине вӑл Альпӑра та,
Испанире те, ҫук, курман.
*Русь* ятлӑ ҫӗр
тӗлӗкӗнче те аптӑратӗ,
Вӑл лӑпкӑн памӗ куҫ хупма.
Пасарнӑ мӑшӑр ут юртать.
Куслаҫӑ—гренадёр чикет чӗн пушине.
Хӗл тӗтринче Париж та курӑнать,
Анчах кӗтет-ши вӑл хӑй патшине?
Кӗтмест.
Фанфара янрамасть.
Пуҫне усать Наполеон.
Авалхи пек Париж алне ҫупмасть,
Диктаторне вӑл калӗ:—Ан!
Хӑй пӗтнине тинех сисет.

Раççей енне вăл ал çĕклет:
„Вăл çĕршыва
хĕçпе
ан кайнă пултăр!
Кайсан—
хĕçне йăтни
эп курнине çеç куртăр!"

---

## РЕКВИЕМ

Рăслан,
аçу
халь çук.
Салам сырса
пĕтернĕччĕ кăна,
салху çыру пырса
тыттарчĕçĕ мана.
Йĕр,
Лира,
йĕр!
Мĕн пек талант çухалчĕ!
Васкарăн, çĕр.
Тин каранăччĕ ик çуначĕ.
Мĕншĕн пўрмен хама
Ăна хураллама,
Умне кăкăрăмпа тăма,
Ун ĕмĕрне çăлма!
Ах, епле çунчĕ вăл
сана курасшăн,
ах, епле çунчĕ вăл
поэзишĕн,
чăвашшăн.
Вăл ўкрĕ.

Аскӑн тимӗр
Шелле пӗлмерӗ аҫуна.
Вӑл утрӗ вутла ҫӑмӑр витӗр...
Ӳссен ӑнланӑн эс ӑна.
Хаваслӑ кулӑ сывлӑша ҫурайӗ,
Тек ҫумӗ пӗлӗтрен кӑвар.
Унчух эс калӑн:
„Ман атте—Бараев
Ҫак ҫутӑ куншӑн ҫапӑҫнӑ хаяр."
Аҫу сан шавлӑн ӗмӗрне ирттерчӗ,
Пули-пулми пӗкмерӗ вӑл пуҫне.
Юлашкинчен вӑл Али-паттӑр пек вӗҫтерчӗ,
Турарӗ,
касрӗ...
Вӑтӑр иккӗре вӑл ӳкрӗ ҫӗр ҫине...
Каҫ-каҫ ун тӑприне сар уйӑх ҫупӑрлатӑр,
Ир-ир лӑпкатӑр шурӑмпуҫӗ,
Кун-кун хӗвелӗ хураллатӑр,
Тӑри юрлатӑр шӑвкӑрав пек уҫҫӑн,
Ҫуркуннепе чечек ҫӗклентӗр,
Пӑшӑлтатма йӑваш ҫил пытӑр...
Иртсе пыран:
Ку ҫын
Сталинграда хӳтленӗ, тетӗр,
Мухтав тесе вӑл ҫӗлӗк хывтӑр.

Декабрь, 1942 ҫ.

## ПӖР ХӖРАРӐМА

Эс макӑрмашкӑн тивӗҫ мар.
Суя,
сан куҫҫулӳ суя!
Вӑл сивӗ пӑр,
вӑл кӑвар мар,

Кăвак шывна ан яр сая.
Упăшкуна эс юратман,
Ахаль вăл çунчĕ канăçсăр,
Ятне чĕрӳ панче тытман,
Халь йĕрмĕшетĕн,
намăссăр!
Вăл тухрĕ çапăçма вăрçа.
Турарĕ,
касрĕ
тăшмана.
Çĕршывшăн хучĕ вăл пуçа...
А эсĕ кĕтрĕн-и ăна?
Çыру эс çыртăн-и час-час
Ху салтакна юрăхлине?
Эс пурăнтăн ытла канас,
Çаклатрăн эс урăххине.
Хитрешĕн,
тумшăн çунтăн эс,
Тумлантăн эс темле майпа...
Эс çавăртăн пĕр ăш кĕтес,
Усал хупах вăл, ман шутпа.
Çĕрле,
çĕрле пухаттăн эс
Ху пек йĕксĕксене.
Их! кĕçенсе
Туртаттăнччĕ йĕтес
Вилни-ха упăшкам, тесе.
Халь савăн,
савăн,
кĕççе пит!
Вăл вилчĕ халь.
Эс ирĕкре.
Ман килĕме ан пус пĕр шит,

Юлташ ятне варлатăн,
чĕмере!
Çĕр питĕнче халер çўрет...
Эс ĕçкĕ турăн,
асрăн эс.
Вăрантăн халь:
„Капла вĕт ят çĕрет.
Ачам ўссен мĕн тес?"
Кая юлса çав ўкĕнен.
Сан çылăхна эп каçармасп.
Ахаль шур тутăр йĕпетен,
Хурмишĕн çеç вĕт.
Ăнланап.
Мĕн макăран?
Сан ахăлтатмалла.
Çĕнни сан пур.
Кĕçен,
кĕçен!
Халь макăрсассăн—
ман макăрмалла,
Çăвăнмалла куçульпелен.

Декабрь, 1942 ç.

---

## МУСКАВ

(Ода)

Чугун кӗлеллӗ атӑпа
Кунта кӗресшӗнччӗ тиран.
Каппайчӑк, йӗрӗнчӗк шапа!
Вӑл шутламан айван пуҫпа,—
Мускав нихӑҫан та парӑнман.

Хура йышпа шуса тухса,
Вӑл хӗрӗхпӗрремӗш хӗле
Тӑхлан сапса, кӑвар тӑкса,
Халӑхсене пуҫҫаптарса
Кӗресшӗн пулчӗ Кремӗле.

Мухтавлӑ тӗп хула,—Мускав!
Эс хӑрамарӑн палачран,
Эс тухрӑн сулӑмлӑн, васкав,
Йыхравлӑн вӗлкӗшрӗ ялав,
Хӑме ҫӗклерӗн хурҫӑран.

Октябрьпе ноябӗре
Тӑссе ирттертӗн те, юта
Эс ҫапрӑн ҫавӑрса ҫӗре,
Эс хаплаттартӑн та тепре
Йӑванчӗ анчӑк аната.

Чакать, чакать халь супостат,
Кышлать вӑл Днепр ҫыранне,
Анчах та шывӗ ӑшалать,

Кăпăкланать, тапать, туртать,
Фрица çăтать вăл аварне.

Аманнă кашкăр пит усал,
Хăйрать вăл хуçăк асавне,
Асăрхаймарăн, май пулсан,
Пĕрре çапсассăн кăнтмасан,
Сикет хаяррăн сан çине.

Халь урнă нимĕç те çавах:
Сикет, туллать, улать, кышлать...
Асаймăн урăх, вăрхурах,
Кĕтет, сан вилĕмӳ пурах,
Эсрел ӳтӳшĕн шăл шаккать.

Хуласене ютран çăлса
Малаваскать, ав, Хĕрлĕ Çар,
Хире Фриц виллине акса,
Çĕршыв питне юнпа çуса,
Васкать, васкать, чи харсăр çар.

Патваррăн тапрĕç чĕресем,
Çĕршыв-çке тасалать муртан,
Çиçеç Украйнă çыннисем,
Хавас кулаç белоруссем,
Латыш тухап тет тамăкран.

Мускав енне, Мускав енне
Пур ĕмĕт-шанчăк ăсанать,
Мускав—атте, Мускав—анне,
Хӳтлет вăл ывăлне хĕрне,
Унта-çке Сталин пурăнать.

Мускав енне, Мускав енне,
Пур çулйĕр анлăн тăсăлать,

Тӗнче итлет Мускав сасне,
Тӗнче пӗлет Мускав вӑйне,
Унта-ҫке Ленин ҫывӑрать.

Мускав—тӑван ҫӗршыв чӗри,
Вӑл ӑшӑтать, вӑл ӑс парать,
Вӑл ҫӑлтӑрсен ҫут ҫӑлтӑрри,
Вӑл чаплӑ юрӑсен юрри,
Вӑл ӗҫ тӗрри, гранит, хӑват!

Мускав тесен—чун ҫӗкленет,
Мускав тесен—паттӑрланан,
Итле, каҫ-каҫ пӗр шав килет:
Вуникӗ залп хаяр кӗрлет
Ҫӗр ҫирӗм тӑвата тупӑран.

Мускав тесен—тӑшман чӗтрет,
Мускав тесен—тарать тӑшман.
Итле, каҫ-каҫ мӑн шав килет:
Пӗр харӑс ҫирӗм залп кӗрлет
Шӑп икҫӗр ҫирӗм тӑвата тупӑран.

Мускав салют парать, салют,
Ҫӗнми ҫарне вӑл саламлать,
Вӑл пехиллет: «Васкавлӑн ут.
Ан астӑр чӑрсӑр ҫичӗ ют,
Аркат, тӑван ҫӗре тасат!»

Ҫулпуҫ пырать ҫул кӑтартса.
Ҫӗнтерӗпӗр! Вара, ҫӗнсен,
Пин тупӑран салют парса,
Авалхилле пин чан ҫапса
Уяв уявлӗҫ халӑхсем.

Эс вилĕмсĕр, Мускав, Мускав!
Нихçан та пулман ют хурри,
Эс—çĕнтерӳ, шурми ялав,
Эс—ирĕклĕх, вĕри йыхрав,
Эс—тĕрĕслĕх, çĕршыв чĕри!

«Мухтав та тав!»—хĕпĕртесе
Çĕкленчĕ сас чĕресенчен.
Телей шевли тăкса, çиçсе,
Сӳнмесĕр çунччăр çăлтăрсем
Сан çӳллĕ башнюсем çинче!

Чувашская
Книжная палата
г. Чебоксары Чувашской АССР

Цена 3 руб.

*Стихван Шавлы*

ГОЛОС ПОЭТА

на чувашском языке

ЧУВАШГОСИЗДАТ ▪ 1943
Чебоксары